**Василий Давыдов-Анатри**

# Ĕне пăрулană



Виççĕмĕш çул ĕнтĕ пирĕн анне фермăра ĕнесем пăхать. Эпир Петĕрпе кашни кун ун патне каятпăр, пултарнă таран пулăшатпăр. Пĕр ирхине анне пире:

— Паян ĕне кĕтĕвне вăрмана илсе каятпăр, — терĕ.

Эпир пĕрле тата Хураçка йытта илсе кайма ыйтрăмăр. Анне хирĕç пулмарĕ.

Вăрманта сывлăш уçă. Пур çĕрте те кайăксем юрă шăрантараççĕ. Хĕвел каç енне сулăнсан Петĕрпе иксĕмĕр пĕр уçланка çырла татма кĕтĕмĕр. Анчах унта нумай çӳреймерĕмĕр. Кĕтмен çĕртен анне пире:

— А-у! А-у! Кунта килĕр! — тесе кăшкăрчĕ.

Тем пулман-ши тесе эпир часах ун патне чупса çитрĕмĕр.

— Ула ĕнепе Хураçка çухалнă. Шырарăм-шырарăм, тупаймарăм, — терĕ анне. Хăй питĕ хăраса ӳкнĕ вара. — Çук, капла хăраса тăнипе ĕç тухмĕ. Эсĕ, Петĕр, кунта юл. Сантăрпа иксĕмĕр ĕнепе Хураçкана шырама кайăпăр, — пĕлтерчĕ вăл.

Йывăççем хушшипе сулхăн çил вĕрме тытăнчĕ. Эпир аннепе вĕтлĕхсене кĕре-кĕре тухрăмăр, тарăн çырмана анса пăхрăмăр, анчах ĕнепе Хураçка ниçта та çук. Иксĕмĕр те хуйха ӳкрĕмĕр.

Анне пире хĕвел анса лариччен ĕне кĕтĕвне яла антарма хушрĕ.

— Эпĕ çухалнă ĕнене шырама юлам, — шут тытрĕ вăл.

Васкасах ёнесене вăрмантан хăваласа тухрăмăр.

Унччен те пулмарĕ, Хураҫка вĕрни илтĕнсе кайрĕ.

— Хураҫка! Хураҫка! — кăшкăрса ячĕ Петĕр.

Йытă пирĕн пата чупса пычĕ. Петĕрпе иксĕмĕре сĕртĕнкелесе илчĕ те ҫавăнтах вăрмана каялла вĕҫтере пачĕ. Эпир ăна вăрҫма пуҫларăмăр:

— Аташса ан ҫӳре, хĕвел аниччен киле ҫитмелле!

Хураҫка каллех пирĕн пата сиксе тухрĕ, пĕрикĕ хутчен хам-хам! хамлатса вĕрсе илчĕ.

— Сана нимĕн те мар. Пирĕн хуйхă: ула ёне ҫухалнă, — пĕлтерчĕ ăна Петĕр.

Хураҫка арҫын ача каланине хăлхана та чикмерĕ, каллех вăрмана кĕрсе кайрĕ. «Мĕне пĕлтерет-ха ку?..»

Эпир Хураҫка хыҫҫăн чупрăмăр. Йытă пĕр лапсăркка хурăн патне ҫитрĕ те ун тавра вĕре-вĕре ҫаврăна пуҫларĕ. Ак тамаша, ҫак хурăн ҫумĕнче пирĕн ҫухалнă ёне тăра парать. Унччен те пулмарĕ, пирĕн Петĕр: «Пăру! Пăру!» — тесе кăшкăрса ячĕ. Чăнах та, пĕр тунката ҫумĕнче хушка пуҫлă хура пăру выртса парать. Ăна ёне ҫула-ҫула типĕтет.

Эпĕ чăтаймарăм, савăннипе:

— Пăру! Пăру! Ула ёне пăруланă! — тесе кăшкăрса анне патне чупрăм.

Анне эпир кăшкăрнине илтнĕ-мĕн. Вăл хăй те пирĕн пата васкать. Эпир ёнесене хăваласа килтĕмĕр. Анне пирĕн хыҫран ула ёнен пăрушне йăтса таврăнчĕ. Фермăна ҫитсенех пăрăва картана ятăмăр, ăна Сатур тесе чĕнме пуҫларăмăр.